Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Давыдов-Анатри Василий Иванович**

**Книга: Асатте парни**

**Стихотворение: Шуршăл каччи**

**(Сăвă ярăмĕ)**

МАЛТАНХИ СĂМАХ

Ыйхă тутлă;
Ялйыш çывăрать,
Пĕр сас-чӳ илтĕнмест урамра.
Каштаран сас парать пĕр автан,
Пиччĕшне вăратать Андриян.

– Тăр, пичче,
Тумланар та каяр,
Иртерех аттене пулăшар.
Конюх ĕçĕ, пĕлен, çăмăл мар,
Витене, тасатар,
Шыв йăтар…

Курать амăш ачи ĕçченне,
Чăн та çăкăр çынни иккенне,
Савăнать, хĕпĕртет чĕререн
Хăй пăхать чĕппине куçĕнчен.

…Шурăмпуçĕ килет, хăпарать,
Юр çуни палăрать урамра.
Витене Иванпа Андриян
Шыв йăтаççĕ таса шур çăлтан.

Çăмăл пек-çке вĕсен ашшĕне,
Конюхри Кĕркури пиччене:
Пулăшаççĕ ăна ачисем,
Пур пекех туйăнать çунатсем.

АХ ВĔÇЕСЧĔ

Тӳпе тăрă. Аван сывлама.
Çынсем тухнă йăлтах урама.
Янăраççĕ хавас юрăсем:
Май уявĕ кĕрлет Шуршăлта.
Андриян ялав йăтнă – малта,
Ăна амăш пăхса савăнать,
Чунтанах ырлăх-сывлăх сунать:
– Ачам, эсĕ ман мăшăр çунат,
Пурнăçри ăмăрткайăк, хăват,
Ут çапла ĕмĕрех малалла,
Юмахри паттăр çын-улăпла…
Андриян тинкерет тӳпене,
Сăнать хурçă хăлат вĕçнине.

Хӑй вара ҫавӑнтах шухӑшлать:
«Эх, вӗҫесчӗ пӗрре кайӑкла!»

Кӑнтӑр ҫилӗ лӑпкать ачана,
Ӗмӗтпе ҫунатланнӑ чуна.
Май уявӗ кӗрлет Шуршӑлта,
Андриян ялав йӑтнӑ – малта.

## ҪУРХИ КАҪ

Уйӑх тулнӑ, шӑвать тӳпере,
Яла карнӑ ҫӑра шур тӗтре.
Темшӗн ҫук Андриян килӗнче,
Пӗтӗм шухӑш йӑлтах ун ҫинче.
Иван пиччӗш, ӑна шыраса,
Анчӗ шухӑ Ҫавал хӗррине.
Тупаймарӗ.
Чунтан хурланса,
Каялла чупса кайрӗ килне.

– Эх анне, тӗл пулмарӑм ӑна,
Мӗн калас,
Питӗ йывӑр чуна.
Ӑнланмастӑп – мӗскер тумалла? –
Шанма ҫук-ҫке ҫурхи Ҫавала…

Амӑш ним те тума пӗлеймест,
Хыпса ӳкнӗ, ҫӑмах чӗнеймест,
Шухӑшлать, хуйхӑрать чӗререн:
«Ах, чӗкеҫӗм, ӑҫта эс ҫӳрен?»

Йывӑҫ алӑк яри уҫӑлать,
Куҫ умне акт тухать Андриян.
Ӑна амӑш тытать, ыталать:
«Чунӑм, эс, туршӑн та, ҫухалман!

Каласамччӗ, ачам, эс ӑҫтан?
Кунӗпех килте ҫук-ҫке паян.
Хӑрамастӑн ҫурхи шыв-шуртан,
Мӗн курас пур шӑнса пӑсӑлсан?»

Андриян ӑнланать амӑшне,
Ачашлать ун ӗҫчен аллине:
– Анне, маншӑн питех ан кулян,
Пуҫӑмра сывлӑх пур-ха паян.

Мӗн тӑвас, каҫа юлтӑм, каҫар,
Кил кунта, лар ҫума, калаҫар.
Телей пур-ха, пӗтмен, тавтапуҫ.
Тытрӑм пулӑ: пӑртас, хӗрлӗ куҫ…

Тепӗр хут эп ыйтатӑп: каҫар,
Вут чӗртер, ҫак пулла ӑшалар.
Вылять уйӑх Ҫавал тӗпӗнче,
Ҫиҫет ҫӑлтӑр тӳпе маччинче.

АЧА ÇУЛĔ

Андриян юрататъ Пушкина,
Юрататъ Артура, Павкăна…
Вăл час-час калаçать Çеçпĕлпе,
Кăвар чунлă чăваш ачипе.

Çамрăксем тĕлĕнеççĕ унран:
Хăй сăпай, вĕренет пит аван.
Вăл чухлать, çамрăклах ăнланать:
Ĕçпе çеç чăн телей тупăнать.

Юмах янă куллен ват çынсем
Авалхи улăп-паттăр çинчен.
Каçса кайнă ялти ачасем,
Шăп çеç ларнă сĕтел хушшинче.

«Тĕнчере вăйли çук этемрен,
Вăй илет вăл çĕрпе хĕвелрен!» –
Андриян тахçанах ун çинчен
Илтнĕ-мĕн ватăрах çынсенчен.

Вăхăт йывăр.
Мĕскер калама
Пĕлмелле çирĕп чунлă пулма?
Вутлă вăрçă пырать çĕршывра,
Арçынсем çапăçаççĕ фронтра.
Вĕçĕ çук. Ĕç нумай колхозра.
Пысăк шанчăк ача-пăчара.
Сахал мар тумалли кил-çуртра,
Ĕне те пăхмалла фермăра.
Амăшне пулăшать Андриян:
Вутă кирлĕ – йăтать вăрмантан.
Ÿркенмст, вăл çÿрет кĕтÿре,
Çуркунне – уй хирте, сÿрере.

Ашкăнать мур илесшĕ тăшман.
«Эх, мен-ма маларах çуралман?
Тĕп тăвасчĕ хура çăхана,
Аркатасчĕ çĕлен-калтана!» –

Чунтанах тарăхать Андриян
Ĕшенсе килнĕ чух акаран.
Вăл туять, вăл шырать, ĕненет:
Вăрçăра Хĕрлĕ Çар çĕнтерет.

Андриян асĕнче – улăпсем –
Ыр ят илнĕ çĕршыв çыннисем:
Чкаловпа Кожедуб, Орловсем…
Вĕсем уншăн сÿнми çăлтăрсем.

## АШШĔ ПИЛЛĔХĔ

Шухăшлать, тертленет Андриян.
Ыйхă çук. Виçĕ каç çывăрман.
Калаçать хăйпе хăй пĕр-пĕччен:
Каймасть ашшĕ ача асĕнчен.

Ăна ашшĕ çĕре кĕриччен
Пехеллинĕ чунтан-чĕререн:
«Санăн пур телейӳ. Ан ӳркен,
Ан хăра нихăсан та ĕçрен.

Ан пис эсĕ, ачам, çĕршывран,
Ан шутла пăрăнма халăхран!»

Тăван ашшĕ çапла калани,
Ăс парса, пиллесе хăварни
Аса килчĕ йăлтах капланса,
Çамрăк çын чĕрине хал парса.

## ВĂРМАН ВИТĔР ÇУЛПА…

Пурнăç, пурнăç васкать малалла,
Унпа тан ĕлкĕрсе пымалла.
Лартать çирĕп тĕллев Андриян:
Ку чухне вĕренсен çын пулан.

Вăл утать вăрман витĕр çулпа,
Канашлать пиччĕшпе, Иванпа:
«Техникум. Çăмăл мар вĕренме,
Тăрăшасчĕ ăна пĕтерме…»

Вăй вылять Атăл шывĕн тĕрри,
Курăнать акă Сĕнтĕрвăрри.
Çакăнта пĕр çемье тус-йышра
Палăрать вăй пурри ачара.

Мĕнле манĕ тăван тăвана?
Пулăшать Иван пиччĕш ăна.
Асилет Андриян амăшне,
Вăл вĕсемшĕн куллен çуннине.

Вăй хушни, вĕренни, тăрăшни,
Çынсене тăванла юратни,
Пачĕç шанчăк ача чĕрине,
Пачĕç шанчăк Шуршăл каччине.

## АН СӲНСЕМ, ЮРАТУ

Хум вылять аслă Атăл çинче,
Ыткăнать çӳл çыран еннелле.
Лапсăркка пĕр йăмра айĕнче
Андриян калаçать хĕрпеле:

– Эх, хули! Тухас çук асăмран,
Çулăм ман пуçлать çакăнтан.

Эп каятăп Карели çĕрне,
Манас марччĕ, туссем, пĕр-пĕрне…

Хĕр тăнлать Андриян сăмахне,
Тем каласшăн пăхать ун çине:
– Ан сӳнсем, юрату, ĕмĕрне,
Ан çухат чăн тӳпе çăлтăрне.

Икĕ чун пĕр-пĕрне юратса
Алă пачĕç ун чух каçхине.
Кĕмĕл уйăх тухать çуталса,
Хĕм сапать аслă Атăл çине.

## КАРЕЛИ ВĂРМАНĔ

Эй, мăнаçлă Карели вăрманĕ,
Кунĕн-çĕрĕн шавлать, сас парать.
Пин-пин кайăк юррийĕ. Кам манĕ
Çурçĕр çилĕ чуна ачашлать.

Андриян малтанах кăмăлларĕ
Çак пуян Калевала çĕрне.
Кĕпе витĕр тухать пурнăç тарĕ,
Саврĕ Атăл каччи хăй ĕçне.

Тĕрлĕ халăх кунта.
Вăрман ĕçĕ
Ăнса пычĕ.
Аван пурăнма
Шутлă кунăн пурах-тăр çав вĕçĕ:
Çитрĕ вăхăт салтак та пулма.

…Андриян летчика вĕренет,
Хайĕнчен хăй йăлтах тĕлĕнет:
Çутă ĕмĕт кĕрет пурнăçа –
Ăçта хурăн чунри савнăçа!

Вăл ларать, шухăшлать: «Çулсем уçă.
Тăрăш çеç, вĕçĕн эс кайăкла.
Чăн тӳпе çăлтăрне куçа-куçăн
Манăн хамăн çитсе курмалла!..»

## ÇĔНĔ ХЫПАР

Командир чĕнтерет хăй патне
Вĕçеври паттăр летчиксене,
Тăванла калаçать вĕсемпе.
Хăй пĕлесшĕн, тĕпчет йĕркипе.

– Андриян Николаев, итле:
Пирĕн çул – космоса çитмелле.
Летчик эс, юрататăн вĕçме,
Кăмăл çук-и татах вĕренме? –

Командир çапла ыйтрĕ унран.
Ним сăмах тупаймасть Андриян.
Сисĕнет: хĕпĕртерĕ чунтан,
Кĕтнĕ вăл çак куна ачаран.

–Тавтапуç. Маншăн ку – çĕн хыпар,
Уншăн эс ĕмĕр кур пархатар, –
Сар хĕвел ача пек йăл кулать,
Николаев сăнне çутать.

Космонавт пуласси çăмăл мар,
Сывлăх кирлĕ юман пек патвар.
Тӳпере çиçĕмле вĕçмелле,
Йывăра çĕнтерме пĕлмелле.

Космоцентр.
Кунта Андриян
Вăй хурать, вĕренет хăй ĕçне.
Çĕр çинче хăнăху пулмасан,
Мĕнле кайăн тĕнче уçлăхне?

Вăл пулать шартлама сивĕре,
Вăл пулать тӳсме çук шăрăхра,
Çаврăнать кутăн-пуçăн пĕрре,
Тепре вăл пĕр-пĕччен шăплăхра.
Николаев пĕлет пит аван:
Вăл начар çын пулма çуралман.

## ÇУЛ УМĔН

Аслă, йывăр çула тухиччен,
Çут тĕнче уçлăхне кайиччен
Андриян шухăшларĕ курма,
Шухăшларĕ чунтан тав тума
Ачаран хăйне çывăх çынна –
Владимир Ильич Ленина.
Мавзолей...
Кам хумханмĕ кунта.
Сас-чӳ çук.
Салтаксем хуралта...
Николаев çулпуç умĕнчен
Утса иртрĕ хуллен, майĕпен.
– Ильич, эсĕ чăваш ачине
Шанса патăн телей уççине.
Сан ăсу, хăвату чунăма
Çунат хушрĕ хăюллă пулма.

Пирĕн çул – космоса тухмалла.
Черет çитрĕ – халь ман каймалла.
Ильич, эсĕ атте вырăнне
Сывлăх сун, пехилле çул çине...

ИКĔ ÇĂЛТĂР

Пирĕн халăх хăюллă, хастар.
Тĕнчипех сарăлать çĕн хыпар.
Тăван халăх, çĕршыв чĕннипе,
Шухăш-кăмăл, чĕре хушнипе
Андриян пĕр тӳлек ирхине
Вĕçсе кайрĕ тĕнче уçлăхне.
Унпа пĕтĕм çĕршыв мухтанать,
Тăван амăш чунтан савăнать,
Ывăлне ырлăх-сывлăх сунать.
Хăй вара чĕререн хумханать:
– Эх, юратнă ачам Андриян,
Çаврăнса эс килсеммчĕ аван...

Çăлтăр витĕр выртан сулпалан,
Çĕршыв панă çунат-вăйпалан
Улăп-паттăр вĕçет космоса,
Çаврăнать Çĕр-планета тавра.

Вăл Гагарин, Титов пек вĕçет,
Унран пĕтĕм тĕнче тĕлĕнет.
Ăна, харсăр чăваш ачине,
Пултарулла совет сыннине,
Саламлать çĕрĕм-шывăм-анне.

Халиччен çын пулман вырăнтан,
Çут тенче тӳпинчен, космосран,
Тĕлĕнетĕн, мĕн пур каласси,
Илтенет Николаев сасси.

– Эс, юратнă çĕршывăм-анне,
Эп пăхатăп савса сан çине.
Яланах эс çĕклетĕн чуна,
Çухатмастăн куçран ывăлна!

Николаев çырать хут çине
Хăй мĕскер тунине, илтнине.
Пурте кирлĕ вĕсем малашне
Çунат аслă совет çыннине.

...Ак Попович тухать уçлăха,
Николаев тусне сас парса.
Икĕ улăп пĕрле, тăванла
Çул хываççĕ малтан малалла.

Шухăшлать, тĕлĕнет Андриян:
Пит аван космосра тус пулсан...
Икĕ çăлтăр çӳлте, тӳпере,
Юратса ыталаççĕ çĕре.

## ХАЛĂХ ЧЫСĔ

Вичкĕн çилĕ вĕрет анăçран,
Савăнать пĕтĕм халăх чунран.
Улăп-паттăрсене çĕршывра
Хамăрах та тăван Мускавра
Кашни çын кăмăлтан чыс тăвать,
Ырлăх-сывлăх сунать, саламлать.
Тӳпере, ав, хĕвел тĕр тĕрлет,
Иртенпех Хĕрлĕ плащадь кĕрлет.
Хӳхĕ юрă юхать ян та ян,
Ак тухать куç умне Андриян.
Саламлаççĕ чăваш ачине,
Совет çĕрĕн ăмăрткайăкне
Пĕрле ӳснĕ юлташ-тантăшсем,
Тус-тăван космонавт-паттăрсем..
Андриян халăха, çĕршыва
Ваттисен йăлипе пуç таять,
Пĕтĕм чун-чĕререн тав тăвать.

1962

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования. Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.